# ТЕЛЕЙ ÇЫРАНĔ

Ытла та чăнкă-çке телей çыранĕ!
Тӳлек çанталăкра хум каннă чух
Унта чупса эп тухаяссăм çук.

Хăмăшлăхран хаш сывласа çил тухтăр.
Пĕреххутчен, чун савнă çырана
Хумсем йăтса кăларччăрах мана.

Анчах кунта та тинĕсен саккунĕ:
Пĕр хумĕ теприне, ав, ӳкерет,
Мана каллех шала илсе кĕрет.

Е, шутласассăн акă тепĕр майлă,
Çыран çине тухса выртсассăнах,
Хĕвел çунтарса ямĕ-ши сăна?

Çук, çук! Çуралнă тинĕсрех çӳрем эп.
Хум çийĕ — савнăç, тĕпĕнче — инкек,
Унта лексе эп якалам чул пек.

Телейлисем телей мĕнне пĕлмеççĕ.
Калам ăсчах пек: çав телей тени —
Телей патне виçесĕр туртăнни.

Апла шавла эс, тинĕсĕм — ман пурнăç,
Хум хыççăн хум хӳтер çине-çинех:
Ялан эп ăнтăлам çыран çине.

*Исмуков, Н. А. Телей çыранĕ : [сăвă] // Исмуков, Н. А. Çăлри çăлтăрсем = Звезды в кладезе : [сăвăсем] / Н. Исмуков. – 2-мĕш хушса кăларнă кăларăм. – Шупашкар, 2011. – С. 180.*